27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АВГУСТ
20
ВЫРСАРНИКУН
164(6659) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

1944 çулхи августăн 20-мĕшĕ. **№ 152.** *Мускав, Кремль.*

Юлташсем — летчиксем, штурмансем, сывлăшри стрелоксем, радистсем, инженерсем, техниксем, мотористсем, истребительнăй, штурмовой, бомбардировочнăй, разведка тăвакан авиаци офицерĕсемпе генералĕсем!

Пĕтĕм Союзри Авиаци Кунĕнче Сире нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешсе çитĕнÿсем тунă ятпа саламласа ырă сунатăп!

Пĕтĕм Хĕрлĕ Çарпа пĕрле, совет авиацийĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяррăн кĕрешет тата противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине, унăн тылĕсемпе çулйĕрĕсене аркатса тăкмаллах пыра-пыра çапать.

Рабочисемпе работницăсем, хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлени, совет авиацийĕн конструкторĕсен тата инженерĕсен пысăк мастерлăхĕ нимĕç авиацийĕ йышлăрах пулнине пĕтерме, хамăр авиацие унтан йышлăрах тума тата Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн Сывлăш-Çар Вăйĕсене пысăк пахалăхлă темиçе пин самолетсемпе хĕçпăшаллантарма май пачĕç.

Тăшмана хирĕç сывлăшра çапăçса, пирĕн летчиксем нихăçан пулман паттăрлăха, хăюлăхпа хастарлăха кăтартса пачĕç, командирсемпе начальниксем сывлăшри çапăçусене ертсе пырас ĕçре мастерлăхпа пултарулăха кăтартса пачĕç. Çавна пула пирĕн çапăçури авиаци халĕ тăшман авиацийĕнчен вăйлăрах, вăл сывлăшра татăклăнах пуç пулса тăрать.

Питех те пултаруллă пиншер летчиксем, штурмансем тата сывлăшри стрелоксем хамăрăн хĕçпăшаллă вăйсен çитĕнĕвĕсене ытларах та ытларах ÿстерсе пыраççĕ тата тăшмана çĕр çинче те сывлăшра та аркатса пыраççĕ.

Хамăрăн çапăçури авиаци тунă çитĕнÿсене ялан-лăха палăртса хăварас тесе, çакăн пек приказ паратăп:

Паян авиаци кунĕнче — августăн 20-мĕшĕнче 17 сехетре хамăр ТĂВАН ÇĔРШЫВ столицинче — Мускавра, инçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, хамăрăн паттăр авиаторсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют памалла.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ ***И. СТАЛИН.***

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем ТАРТУ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—ТАММИСТУ, РАЗИНА, АХЬЯ, ВАЛГЕМЕТСА, КРОТУЗЕ, КАРСТЕ ятлă пысăк ялсем. Пирĕн çарсем ЧУДЬ кÿллипе ПСКОВ кÿлли хушшинчи пролив урлă каçнă та проливăн хĕвеланăç хĕрринче плацдарм тытса илнĕ, Псков кÿллин хĕвеланăç хĕррипе наступлени туса пыракан чăсемпе пĕрлешнĕ, ЛАНЕ, ИЫЕПЕРА, МЕХИКОРМА, ХАВАМЕТСА, РИХТЕМЕТСА, АРАВУ, КЮКА. МЕКСИ СИКАКУРМУ, КАСТМЕКОДА ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ.

ÇУРÇĔР ДВИНА шывĕ çинчи КРУСТПИЛС хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — РУЛИ, КЛАУЦАНЫ, ТРУЛЭС, РАМИ, МАРЦИЭНА, РУБЕНИ, АРОНЫЭШИ ятлă пысăк ялсем тата ЦЕСВАЙНЭ, МАРЦИЭНА ятлă чугун çул станцийĕсем.

ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен наступлени тăвакан пысăк вăйĕсене хирĕç хытă çапăçнă. Хăйĕн çыннисемпе техникине темĕн чухлĕ пĕтерсе çапăçнă хыççăн тăшман пирĕн çапăçури ретсем ăшне кăштах савăлланса кĕнĕ.

ПРАГАРАН хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сире-сире янă, чылай участоксенче хăйсем контратакăсем тунă.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем августăн 18-мĕшĕнче нимĕçсен ВИСЛА шывĕн сулахай хĕрринчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне — САНДОМИР хулине штурмласа туртса илнĕ. Унта, плацдарма аслăлатасшăн çапăçса, МИЛЬЧАНЫ, ЛЕНАРЧИЦЕ, ГЛАЗУВ, КЛЕЧАНУВ, ДОБРОЦИЦЕ, ПШЕЗВОДЫ, ЛУКАВА, КИХАРЫ, ДВИКОЗЫ, МСЬЦЮВ, ЩИТНИКИ, СЛУПЧА, ВИНЯРЫ, ГАРБУВ, РОМАНУВКА, НОВАНУВКА НОВА, СОБУТКА-ШЛЯХЕЦКА, ЯНОВИЦЕ, ЛОНАТА, САДЛОВИЦЕ, ПЕЛЯШУВ, КОСЬЦЕЛЬНЕ ятлă ялсене тата ДВИКОЗЫ, ГУРЫ ВЫСОКЕ ятлă чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

САНДОМИР хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшманăн виçĕ дивизирен тăракан группировкине таччăнах çавăрса илнĕ, çав группировкăна пĕтерсе тăкассишĕн ăнăçлăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Августăн 17-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 295 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче те та зенитнăй артиллери тăшманăн 98 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Тарту хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла ăнăçлăн тапăнса пынă. Пĕр соединени чăсĕсем, тăшманпа çапăçса, 10—15 километр малалла кайнă. Çулсен Ахья ятлă узелне тата нимĕçсен оборонин Тарту (Юрьев) хулинчен 25 километрта ларакан Валгеметса ятлă тĕреклĕ пунктне штурмласа туртса илнĕ. Тăшманăн пĕр пин ытла салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, хăй тĕллĕн çÿрекен 3 тупă, 6 хир туппи, 10 миномет тата 20 пулемет пĕтерсе тăкнă. 25 тупă, 8 миномет, 127 пулемет, 400 винтовкăпа автомат тата инженери пурлăхĕпе апат-çимĕçĕн 2 складне тытса илнĕ. Каçхине пирĕн çарсем Псков кÿллипе Чудь кÿлли хушшинчи пролив урлă каçнă. Катерсем çинчен артиллери персе хÿтĕлесе тăнипе усă курса, совет боецĕсем çыран çине çав тери хăвăрт аннă та, çисĕм лек хăвăрт атакăласа, тăшманăн çыран хĕрринчи оборона тăрăхне татнă. Нимĕçсем хытă хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре, пирĕн чăсем проливăн хĕвеланăç хĕрринче плацдарм тытса илнĕ те Псков кÿлли хĕррипе çурçĕрелле наступлени туса пыракан çарсемпе пĕрлешнĕ.

* * *

Шауляй (Шавли) хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман паян ирхине çĕнĕрен наступлени пуçласа янă. Пĕр участокра чылай хутчен ăнăçлăн атакăланă хыççăн тăшман танкĕсемпе пехоти пирĕн çапăçури ретсем ăшне кăштах савăлланса кĕнĕ. Кăнтăрла советсен моторизованнăй чăсĕ контратака пуçласа янă. Пирĕн боецсем, тăшмана флангсенчен пыра-пыра çапса, унăн пехотине танкĕсенчен татса илнĕ. Танксен хÿттисĕр тăрса юлнă хыççăн нимĕç пехоти ним йĕрки-паллисĕр каялла чакнă. Совет артиллерисчĕсемпе танкисчĕсем нимĕçсен 43 танкне пĕтерсе тăкнă, вара ытти танкĕсем васкасах каялла чакнă. Ку участокра малтанхи позицисене пăлтах каялла туртса илнĕ. Тепĕр участокра тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсем пирĕн позицисене татти-сыпписĕр атакăлаççĕ. Нимĕçсем çапăçăва пĕр харăс çĕршер танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем е унтан ытларах та кĕртсе яраççĕ. Хаяр çапăçу пырать. Пур тĕрлĕ хĕçпăшалпа персе тата хирĕç пыра-пыра çапса, пирĕн çарсем нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухату кÿреççĕ. Темĕн пысăкĕш çухату тÿснĕ хыççăн тăшман пирĕн оборона ăшне кăштах савăлланса кĕнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 74 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине, 24 хир туппине, 8 бронетранспортерне, 8 бронемашинине тата горючи тултарнă 5 автоцистернине персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн штурмлакан авиаци тăшманăн çапăçури речĕсене вĕçĕмсĕр пыра-пыра çапнă, нимĕçсен темиçе танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине, темиçе çĕр автомашинине пĕтерсе тăкнă, пысăк боеприпас складне сирпĕнтерсе янă, тăшман пехотин темиçе колоннине сапаласа янă.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем паян нимĕçсен Висла шывĕ çинчи оборонин питĕ вăйлă тĕреклетнĕ пунктне — Сандомир хулине штурмласа туртса илнĕ. Тăшман ку хулара вăйлă çирĕпленсе ларнă. Нимĕçсем чул çуртсене, чартаксене тата подвалсене оборонăра тăма майлаштарса хунă. Совет чăсĕсем Сандомир хулине икĕ енчен вăркăнса кĕрсе кайнă та, тăшман гарнизонне хĕссе, пĕр чарăнмасăр малалла куçса пынă. Хула урамĕсенче çĕрĕпех хаяр çапăçусем пынă. Пирĕн штурмлакан ушкăнсем, артиллери пулăшнипе, хирĕç тăмалли вырăнсенчен гитлеровецсене çапа-çапа кăларнă, вĕлере-вĕлере пĕтернĕ. Паян ир енне совет çарĕсем Сандомир хулине фашистла нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатнă. Трофейсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисен шучĕ пысăк.

Пирĕн çарсем çаплах Висла шывĕн сулахай енчи плацдарма аслăлатасшăн ăнăçлă çапăçнă. Пĕр соединени чăсĕсем çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле куçса пынă. Çав вăхăт хушшинче тепĕр соединени чăсĕсем Виняры тата Слупча ялĕсен районĕнче Висла шывĕ урлă каçнă та, нимĕçсем хытă хирĕс тăнине çĕмĕрс-çĕмĕре, хĕвеланăçнелле кайнă. Паян тĕрлĕ енчен наступлени туса пыракан совет чăсĕсем нимĕçсен виçĕ дивизине çавăрса илсе пĕрлешнĕ. Халĕ «хурана» кĕрсе ÿкнĕ тăшман чăсĕсене пĕтерсе тăкассишĕн ăнăçлă çапăçаççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, гитлеровецсене икĕ батальон ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 10 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 4 тупă тата 35 хир туппи пĕтерсе тăкнă.

Гварди капитанĕ Константинов советсен 8 истребительне ертсе пынă. Çаксене сывлăшра нимĕçсен 20 истребителĕ тĕл пулнă. Совет летчикĕсем тăшмана атакăланă та хаяр çапăçура нимĕçсен 4 самолетне персе ÿкернĕ. Пирĕн пĕр истребитель те пĕтмен. Çакăн хыççăн Константинов истребителĕсен ушкăнĕ тăшманăн 8 истребителĕпе çапăçма тытăннă, нимĕçсен 2 самолетне персе ÿкернĕ. Çак кун гварди капитанĕ Константинов пĕр хăй кăна тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи нимĕç çарĕсен «вăтаçĕрти» ушкăнне аркатса тăкни фашистсен власть тытса тăракан шайккине шиклентерсе ÿкернĕ. Нимĕçсене мĕн пирки аркатса тăкнине пытарса хăварма тата хăйсен панкрута тухнă пуçлăхне Гитлера тÿрре кăларма тăрăшса, гитлеровецсем тем те пĕр шутласа кăлараççĕ. Берлинра васкаса суя хыпарсем туртса кăлараççĕ, фашистла Германин пĕтĕм шанчăкĕ пĕтмен-ха, тесе ĕнентерме тăрăшаççĕ.

Берлинри радио августăн 15-мĕшĕнче Дитмар генерал-лейтенантăн вăрçă ĕçĕсене пăхса тухнă статьине панă. Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи лару-тăру çинчен Дитмар çапла çырнă: нимĕç çарĕсен вăтаçĕрти группировкине аркатса тăкни пуринчен ытла «тăшман пирĕнтен йышлă пулнинчен килет...» тенĕ.

Темиçе кун маларах, августăн 13-мĕшĕнче, фашистсен «Ангрифф» хаçатĕнче Гитлерăн чи шанчăклă паллă тарçин Лейăн статьи пичетленсе тухнă. Çак статьяра та, Дитмар статьинчи пекех, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕç çарĕсене аркатса тăкнин сăлтавĕсем çинчен каланă. Лей унта çапла çырнă: «Совет çарĕсем Витебск патĕнчен пуçласа Минск урлă Хĕвелтухăç Прусси патнелле вăркăнма пуçласан, эпир хытă хăраса ÿкрĕмĕр... Ирĕксĕрех çакăн пек ыйту тухса тăчĕ: вырăссем пирĕнтен çав тери йышлăши вара, пултарулăх енчен те тата шухăш-кăмăлĕсемпе те вĕсем çав тери çÿлте тăраççĕ-ши вара... Халĕ пирĕншĕн çакă лайăхах паллă пулса тăчĕ: нимĕç çарĕсем Сталинград патĕнчи фронтран пуçласа Вильнăпа Варшава патне çитиччченех пыракан фронтра нимĕç çарĕсем поражени тÿснĕшĕн нимĕç сутăнчăкĕсем айăплă». Совет çарĕсем çынсем тĕлĕшпе те, техника енчен те вăйлăраххи çинчен калакан сăмахсене Лей «ухмах сăмахсем, поражени майлă калакан халлапсем» тет.

Çапла ĕнтĕ, Дитмар генерал-лейтенант çапла ĕнентерет: «Вырăссем нимĕçсен вăтаçĕрти фронтне хăйсем йышлă пирки аркатса тăкнă». Лейĕ вара çакăн пек çухăрать: «Пĕрех те ун пек мар. Кам вырăссем йышлăрах тесе калаçать, вăл ухмах, пораженец. Кунта пуриншĕн те нимĕç генералĕсем айăплă», тет. Фашистсен хорĕнчи суеçĕсем çĕр тĕслĕ суйни гитлеровецсен лагерĕнчи çынсен сехрисем хăпса тухнинчен килет. Гитлеровецсем хăраса ÿкнĕ кăна мар пулмалла, вĕсен пуçĕсем те çаврăнса кайнă пулмалла. Çавăнпа та вĕсем кашни хăй тĕрлĕ, кашни урăхла суяççĕ, пĕрне-пĕри: суятăн! тесе тăрăшыв çине кăлараççĕ. Çак тĕлĕшпе вĕсем темĕн чухлĕ ăмăртсан та, пĕр гитлеровец та пĕтесрен хăтăлса юлаймĕ.

Укерчĕк çинче: (сулахайран сылтăмалла): Совет Союзĕн Виçĕ хут Геройĕ—летчик-истребитель, гварди полковникĕ **А. И. Покрышкин**; Сталинла преми лауреачĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ, авиаконструктор, инженерипе авиаци службин генерал-лейтенанчĕ **А. С. Яковлев**; Балтикăн чапа тухнă летчикĕ, гварди майорĕ **И. И. Борзов**, ăна тăватă хутчен Хĕрлĕ Ялав орденĕпе тата пĕр хут I-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе наградăланă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

„Ача амăшĕ—героиня" тенĕ хисеплĕ ят çинчен калакан положение, „Ача амăшĕн мухтавĕ" ятлă I-мĕш, II-мĕш, III-мĕш степень орденăн тата „Ача амăшĕн медалĕ" ятлă I-мĕшпе II-мĕш степень медалĕн положенийĕсене тата вĕсем çинчен çырса кăтартнисене çирĕплетесси çинчен

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче «Йывăр çын пулнă хĕрарăмсене, нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан амăшĕсене государство енчен пулăшассине ÿстересси, ача амăшĕсен тата ачасен пурнăçне сыхлас ĕçе вăйлатасси çинчен, «Ача амăшĕ—героиня» тенĕ хисеплĕ ят тăвасси, «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орден тата «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă медаль тăвасси çинчен» кăларнă Указĕ тăрăх, СССР Верховный Совет Президиумĕ çапла йышăнать:

1. «Ача амăшĕ — героиня» тенĕ хисеплĕ ят çинчен калакан положение тата «Ача амăшĕ — героиня» ятлă орден çинчен çырса кăтартнине çирĕплетес.

2. «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă I-мĕш, II-мĕш тата III-мĕш степень орденăн положенине тата çав орден çинчен çырса кăтартнине çирĕплетес.

3. «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă I-мĕш тата II-мĕш степень медалĕн положенине тата çав медаль çинчен çырса кăтартнине çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августăн 18-мĕшĕ.

„Ача амăшĕ—героиня" тенĕ хисеплĕ ят çинчен калакан положени

1. «Ача амăшĕ — героиня» тенĕ хисеплĕ ята СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх параççĕ, ăна вунă ача çуратса ÿстернĕ амăшĕсене параççĕ.

2. «Ача амăшĕ — героиня» тенĕ хисеплĕ ята ача амăшне унăн юлашки ачи пĕр çул тултарсан тата ытти ачисем пурăнаççĕ пулсан параççĕ. «Ача амăшĕ — героиня» тенĕ хисеплĕ ята панă чухне ача амăшĕн Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче вилнĕ е пĕр хыпарсăр çухалнă ачисене те шута илеççĕ.

3. «Ача амăшĕ — героиня» тенĕ хисеплĕ ят илнĕ ача амăшĕсене «Ача амăшĕ—героиня» ятлă орден тата СССР Верховный Совет Президиумĕн грамотине параççĕ.

4. «Ача амăшĕ—героиня» ятлă ордена тата СССР Верховный Совет Президиумĕн грамотине СССР Верховный Совет Президиумĕ парать е ăна, СССР Верховный Совет Президиумĕн ячĕпе, союзлă тата автономиллĕ республикăсен Верховный Совет Президиумĕсем параççĕ.

5. «Ача амăшĕ—героиня» ятлă ордена илнĕ ача амăшĕсем ăна сулахай кăкăр çинче çакса çÿреççĕ, вĕсен тата ытти орденсемпе медальсем те пур пулсан—çав орденсемпе медальсенчен çÿлерех çакмалла.

6. «Ача амăшĕ—героиня» тенĕ хисеплĕ ят илнĕ ача амăшĕсем СССР орденĕсем çинчен калакан положенин 10—14-мĕш статьисенчи çăмăллăхсемпе усă кураççĕ.

«Ача амăшĕ—героиня» тенĕ хисеплĕ ят илнĕ ача амăшĕ вилсен, «Ача амăшĕ — героиня» ятлă орден тата СССР Верховный Совет Президиумĕн грамоти, çав ача амăшне асăнмашкăн усрама, унăн çемьинчех юлаççĕ.

„Ача амăшĕн мухтавĕ" ятлă орден çинчен калакан положени

1. «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орденпа çичĕ ача, сакăр ача тата тăхăр ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене наградăлаççĕ.

2. «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орденпа, СССР Верховный Совет Президиумĕн ячĕпе, союзлă тата автономиллĕ республикăсен Верховный Совет Президиумĕсем наградăлаççĕ, вĕсем наградăланине вара кайран СССР Верховный Совет Президиумĕ çирĕплетет.

3. «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орден виçĕ степеньлĕ пулать:

«Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă 1-мĕш степень орден,

«Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă II-мĕш степень орден,

«Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă III-мĕш степень орден.

Вĕсенчен чи асли—I-мĕш степень орден пулса тăрать.

4. «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орденпа çаксене наградăлаççĕ:

çичĕ ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене — III-мĕш степень орденпа,

сакăр ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене—II-мĕш степень орденпа,

тăхăр ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене—1-мĕш степень орденпа.

5. «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орденпа ача амăшне унăн юлашки ачи пĕр çул тултарсан тата ытти ачисем пурăнаççĕ пулсан наградăлаççĕ.

«Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орденпа наградăланă чухне ача амăшĕн Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче вилнĕ е пĕр хыпарсăр çухалнă ачисене те шута илеççĕ.

6. «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орденпа сакăр ачаллă тата тăхăр ачаллă амăшĕсене наградăланă чухне вĕсене пĕр орденпа çеç наградăлаççĕ.

«Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă I-мĕш, II-мĕш тата III-мĕш степень орденсене, СССР Верховный Совет Призидиумĕн ячĕпе, союзлă тата автономиллĕ республикăсен Верховный Совет Президиумĕсем тата ĕççынни депутачĕсен облаççенчи, крайсенчи, хуласенчи тата районсенчи Исполнительнăй Комитечĕсем параççĕ.

8. «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă I-мĕш, II-мĕш тата III-мĕш степень ордена сулахай кăкăр çинче çакса çÿреççĕ, наградăланă çыннăн тата ытти орденсемпе медальсем те пур пулсан—çав медальсенчен çÿлерех çакса çÿреççĕ.

9. «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орденпа наградăланă ача амăшĕсем СССР орденĕсем çинчен калакан положенин 10—14-мĕш статьисенче кăтартнă çăмăллăхсемпе усă кураççĕ.

10. «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орден илнĕ ача амăшĕ вилсен, çав орден, хăйĕн кĕнекипе пĕрле, çав çынна асăнмашкăн усрама, унăн çемьинчех юлать.

„Ача амăшĕн медалĕ" ятлă медаль çинчен калакан положени

1. «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă медальпе пилĕк ача тата ултă ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене наградăлаççĕ.

2. «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă медальпе, СССР Верховный Совет Президиумĕн ячĕпе, союзлă тата автономиллĕ республикăсен Верховный Совет Президиумĕсем наградăлаççĕ.

3. «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă медаль икĕ степеньлĕ пулать:

I-мĕш степень «Ача амăшĕн медалĕ»,

II-мĕш степень «Ача амăшĕн медалĕ».

Вĕсенчен чи асли — I-мĕш степень медаль пулса тăрать.

4. «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă медальпе çаксене наградăлаççĕ:

пилĕк ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене — II-мĕш степень медальпе,

ултă ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене — I-мĕш степень медальпе.

5. «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă медальпе ача амăшне унăн юлашки ачи пĕр çул тултарсан тата ытти ачисем пурăнаççĕ пулсан наградăлаççĕ.

«Ача амăшĕн медалĕ» ятлă медальпе наградăланă чухне ача амăшĕн Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче вилнĕ е пĕр хыпарсăр çухалнă ачисене те шута илеççĕ.

6. Ултă ачаллă амăшĕсене пĕр медальпе çеç, I-мĕш степень медальпе наградăлаççĕ.

7. «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă I-мĕш тата II-мĕш степень медальсене, СССР Верховный Совет Президиумĕн ячĕпе, союзлă тата автономиллĕ республикăсен Верховный Совет Президиумĕсем тата ĕççынни депутачĕсен облаççенчи, крайсенчи, хуласенчи тата районсенчи Исполнительнăй Комитечĕсем параççĕ.

8. «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă I-мĕш тата II-мĕш степень медале сулахай кăкăр çинче çакса çÿреççĕ, наградăланă çыннăн тата ытти орденсемпе медальсем те пур пулсан — вĕсемпе юнашар е вĕсенчен аяларах çакса çÿреççĕ.

«Ача амăшĕн медалĕ» ятлă медаль илнĕ ача амăшĕ вилсен, çав медаль, удостоверенипе пĕрле, çав çынна асăнмашкăн усрама, унăн çемьинчех юлать.

Республика уйхирĕсенче

Электричество вăйĕпе авăн çапмалла тунă

КУСЛАВККА. Паланкассинчи «Коминтерн» колхоз кĕрхи тырăсене планпа палăртнинчен икĕ кун маларах, 6 кунта, пухса кĕртнĕ. Нумай колхозницăсем хăйсен ĕç нормине 3—4 хут ирттерсе тултарса пынă. Фронтовик арăмĕ Казакова Анна çурлапа куллен 0,10 гектар вырас вырăнне 0,40 гектар вырнă.

Халĕ колхоз кĕрхи тырăсем акать. Кунта 70 çулхи старик П. Савельев юлташ (унăн икĕ ывăлĕ фронтра) ĕç нормине икĕ хут ытла тултарса ĕçлет.

Вырнă тырра кĕске вăхăтрах çапса пуçтарас тесе, молотилкăна электричество вăйĕпе ĕçлемелле тунă. Витнĕ итеме электричество çутатать. Колхозниксем кунĕн-çĕрĕн авăн çапма пултараççĕ.

М. ИЛЬИН.

Шкул ачисем уйхир ĕçĕнче

Анса пулнă тырпул колхоз çамрăкĕсен ĕçлес кăмăлне çĕклет.

Пирĕн Шупашкар районĕнче икĕ пин ытла шкул ачи, 163 учитель колхозсен уйхирĕсенче ĕçлеççĕ.

Иртнĕ çулхи ĕç опычĕпе усă курса, эпир 53 çĕрте шкул ачисен отрячĕсене йĕркелерĕмĕр. Унта 820 çамрăк ĕçлет. Çав отрядсем август уйăхĕ тĕлне 25.420 ĕçкунĕ тунă. Уйрăмăнах Толиково, Чĕкир, Хыркасси шкулĕсенчи ĕç отрячĕсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Толиково шкулĕнче вĕренекенсем хăйсем кăна 2.812 ĕçкунĕ тунă.

Çавăн пекех уйрăмăн ĕçлекен шкул ачисем те ыттисене пример параççĕ. Хыркасси шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекен пионерка Валентина Дмитриева «Актив» колхозра звеновод пулса ĕçлет. Унăн звенинче 6 çын, вĕсем кунсерен çур гектар ытла выраççĕ. Звеновод Дмитриева хăйĕн нормине чылай ирттерсе тултарать. Кунта ĕçĕн пахалăхĕ те начар мар, вырнă тырра яланах вăхăтра типĕтсе çĕмел туса пыраççĕ.

Çав шкулта вĕренекен Геннадий Петров, Егор Димитриев, Изосим Тихонов комсомолецсемпе пионерсем те кăçал 60—75-шер ĕçкунĕ тунă.

Кунсăр пуçне пучахсем пухас тĕлĕшпе 16 çĕрте шкул ачисен отрячĕсем ĕçлеççĕ. Унта 215 çамрăк. Вĕсем 1.157 килограмм пучах пухнă.

Районри учительсемпе шкул ачисем кăçал август уйăхĕ тĕлне 65.069 ĕçкунĕ тунă. Шкулсенче занятисем пуçланиччен вĕсем татах та нумай ĕçлĕç-ха.

А. ЕГОРОВА,
ВЛКСМ Шупашкар райкомĕн секретарĕ.

Ыраш акма халĕ те тухман

ЭЛĔК, августăн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра тырă вырас ĕç çаплах начар хăвăртлăхпа пырать. Чылай колхозсем çак куна çитсе те ыраш вырса пĕтермен-ха. Малта пыракан «Шуçăм», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем пĕрчĕллĕ тырăсене вырса пĕтереççĕ. Тукташри, Хирлеппуçĕнчи, Пизенер ялсоветĕнчи колхозсем тырăсене 60 процента яхăн вырса пуçтарнă. Чăваш Сорăм ялсоветĕнчи колхозсем тырă вырассине 47,5 процент, капана хывассине 4,4 процент, çапассине 2,4 процент кăна пурнăçланă. Ĕç вăрăма тăсăлни ĕçре уйрăм сдельщина çуккинчен тата машинăсемпе туллин усă курманнинчен килет. «Заветы Ильича» колхозра ĕç дисциплини ытла та начар. Дисциплина япăххи пĕтĕмпех колхоз председателĕнчен Терентьев юлташран килет. Кунта час-часах вăл ирĕк панипе колхозри ĕçрен пăрăнаççĕ. Терентьев шухăшĕпе çуртыррисене вырма халĕ ир-ха. Çак шухăшпа вăл августăн 15-мĕшĕнче мĕнпур колхозниксене мăйăр пухма кăларса янă. Çав вăхăтрах тулă, сĕлĕ тата урпа пиçсе çитнĕ, вĕсем тăкăнма та пултараççĕ.

«Звезда» колхозра уйрăм сдельщина çук, кĕлтесене çыхнă чухне тырă пучахĕсем нумай тăккаланса юлаççĕ.

Государствăна тырă парасси çителĕксĕр пырать. «Звезда» колхозăн график тăрăх паянхи кун тĕлне 68 центнер памалла, анчах та вăл 4.6 центнер кăна леçнĕ.

Ыраш акас ĕç те районра начар пырать, 973 гектар кăна акнă. Элĕкри «Большевик», Ойкассинчи Буденный ячĕпе тăракан колхозсем çак вăхăта çитсе те ыраш акма тухман. Акасса вара пур тĕлте те алăпа акаççĕ, сеялкăсемпе усă курмаççĕ. Сеялкăсемпе районра пурĕ те 83 гектар кăна акнă.

Х. ЛИСИН.

ФАШИСТЛА ФИНН ЗАХВАТЧИКĔСЕМ КАРЕЛ-ФИНН ССР-ĕн ТЕРРИТОРИЙĔ ÇИНЧЕ ТУНĂ ТИСКЕР ĔÇСЕМ ÇИНЧЕН

Фашистла нимĕç захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер ĕçсене тĕпчесе палăртакан Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси

П Ĕ Л Т Е Р Н И

Карел-Финн ССР-ĕн вăхăтлăха оккупациленĕ территорийĕ çинче Финлянди правительствипе финсен верховнăй командованийĕ, хăйсен империалистла планĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, совет çыннисене чура туса хума, халăх культурине пĕтерсе тăкма тата Карел-Финн ССР-не колони туса хума хапсăннă. Финсен штабĕн «Хĕвелтухăç Карелири çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен отделĕ» текен организаци панă наставленире, 1944 çулхи июнь уйăхĕнче финсен çыран хĕрринчи 13-мĕш артиллери полкĕн штабне çапса аркатнă чухне Хĕрлĕ Çар тытса илнĕскерĕнче, çар влаçĕсене Карел-Финн ССР-ĕн тата Совет Союзĕнчи ытти облаçсен территорийĕсене тытса илме кирлине кăтартса панă. Унта çапла каланă: «...хальхи вăхăтра Финляндире строительство валли вăрман çителĕксĕр пулсан, Хĕвелтухăç Карелири пуян вăрмансем вĕсенчен капитал тăвассине кĕтеççĕ... Хĕвелтухăç Карелири вăрман çитĕнсе çитнĕ лайăх вăрман, çав вăхăтрах Финляндири вăрмансем çамрăк-ха, вĕсем строительство материалĕ тума юрăхсăртарах. Çакăнпа пĕрлех, Хĕвелтухăç Карелире юханшывсемпе кӳлĕсем нумай пулни унтан сахал тăкаксем тусах вăрман турттарма лайăх май парать. Çакă вăл экономика тĕлĕшĕнчен питех те пысăк усă кӳрет».

Финлянди правительстви хăйсем тытса илнĕ территори çинчи мĕнпур совет çыннисене тыткăна лекнĕ çынсем пулса тăраççĕ тесе çав тери сĕмсĕррĕн те намăса пĕлмесĕр пĕлтернĕ, арçынсемпе хĕрарăмсене, ватă çынсемпе ачасене ятарласа тунă концентрациллĕ лагерьсене хупа-хупа лартнă, çав лагерьсенче совет çыннисене пĕтерсе тăкас шутпа, выçлăхпа асаплă пурăнăçăн режимне туса хунă, çынсене вăй çитерейми йывăр ĕçсенче ĕçлеттернĕ.

Фашистла финн оккупанчĕсем хăйсем вăхăтлăха тытса илнĕ Карел-Финн ССР-ĕн территорийĕ çинче тунă çав тери тискер ĕçсене уйрăм комисси тĕпчесе тухса тăрă шыв çине кăларнă. Çав комиссире çаксем тăраççĕ: СССР Верховный Совечĕн депутачĕ генерал-майор Г. Н. Куприянов, Карел-Финн ССР Совнаркомĕн председателĕ П. С. Прокконен, Д. Н. Никитин полковник; комисси ĕçĕсене Чрезвычайнăй Государственнăй Комиссин представителĕ В. Н. Макаров тата суд медицинин эксперчĕсем хутшăннă.

I. СОВЕТ КАРЕЛИЙĔНЧИ ХУЛАСЕМПЕ ЯЛСЕНЕ ИШĔЛТЕРНИ

Пĕтр патша Онега кӳллин хĕвеланăç çыранĕнче 1703 çулта хывнă Петрозаводск хули Совет влаçĕн çулĕсенче Карел-Финн Советлă Социализмлă Республикин промышленноçпа культурăн пысăк центрĕ пулса тăчĕ.

Фашистла финн захватчикĕсем оккупаци вăхăтĕнче, уйрăмах хăйсем чакса тухас умĕн, Карел-Финн ССР-ĕн столицине тискеррĕн çунтарнă, çаратнă тата ишĕлтернĕ.

Совет культурине çав тери кураймасăр [illegible]

[illegible] тата уйрăмах совет влаçĕн çулĕсенче хăватлăн ӳссе кайнă авалхи предприятин электростанцине, электростанци пĕвине, пурăнмалли çуртĕсене, подсобнăй предприятийĕсене сирпĕнтерсе янă, пĕтере-пĕтере тăкнă. Финн захватчикĕсем заводăн мĕнпур 20 цехĕнчи оборудование пĕтĕмпех Финляндие турттарса кайнă.

Финсем Петрозаводскра Совет Союзĕнчи йĕлтĕр тăвакан чи пысăк фабрикăна сирпĕнтерсе аркатнă. Çав фабрика вăрçăчченхи çулталăкра 500.000 мăшăр ытла чи лайăх йĕлтĕрсем туса кăларса тăнă. Финсем йывăç каскалакан завода çунтарса янă, холодильника, типографие, ликерэрех тата сăра завочĕсене, çăкăр завочĕсене пĕтерсе тăкнă, суднăсем тăвакан заводăн шыв çинчи сооруженийĕсемпе цехĕсене сирпĕнтерсе янă.

Карел-Финн ССР-ĕн оккупациленĕ районĕсенче фашистла захватчиксем вăрман хатĕрлемелли тата йывăç юхтармалли мĕнпур механизациленĕ предприятисемпе сооруженисене пĕтерсе тăкнă; йывăç каскалакан 4 завода тата мебель фабрикине, Кондопогăри целлюлоза заводне çунтарса янă, Кондопогăри государство электростанцийĕн шыв хуçалăхне, Медвежьегорскри электростанцие, Повенецри суднăсем юсамалли завода, Кондопогăри пегматитовăй завода тата ытти нумай тĕрлĕ предприятисене сирпĕнтерсе янă. Финн оккупанчĕсем Шурă Тинĕспе Балтика хушшинчи Сталин ячĕпе тăракан каналăн сооруженийĕсене çав тери пысăк сиенсем кӳнĕ: 7 шлюзăн хапхине, аварирен сыхланмалли хапхана, шлюз камерисен эстакада стенисене, пĕвисемпе дамбисене, шыв уçса ямаллисене, бетон тĕрекĕсене сирпĕнтерсе янă. Финн аркатуçисем çавăн пекех Карел-Финн ССР-ĕн ытти мĕнпур хулисемпе нумай ялĕсенче те çавăн пекех ишĕлтерсе пĕтернĕ.

II. ФИНН ЗАХВАТЧИКĔСЕМ МИРЛĔ СОВЕТ ГРАЖДАНĔСЕНЕ ХĂЙСЕН ЧУРИСЕМ ТУСА ХУМА ХĂТЛАННĂ

[illegible] лагерь — радиомачта патĕнче тунăччĕ. Мĕнпур çынсене — ваттисемпе çамрăккисене те конвойпа йывăр ĕçе хăваласа каятчĕç. Çынсем çине пăхма та хăрушăччĕ — вĕсем çав тери асапланса имшерленсе çитнĕччĕ. Питĕ нумайĕшĕсем çав асапа тӳсеймесĕр вилсе пĕтрĕç. Хула çыннисем лагерьсенче асапланнă вăхăтра, эпир, финн салтакĕсем, Петрозаводск хулинче хăйĕнче те, çавăн пекех таврари ялсенче те питĕ лайăх пурăнтăмăр. Çуртсенче вырăнти халăхăн мĕнпур пурлăхĕпе апат-çимĕçĕсем тăрса юлнăччĕ. Çав пурлăха пĕтĕмпех хуçасăр пурлăх тесе пĕлтерчĕç те, эпир, паллах вара, çывăрмарăмăр, хамăра мĕн юрăхлă пек курăннине пурне те пуçтартăмăр. Нумай пурлăха эпир Финляндие хамăр тăвансем патне ăсатрăмăр. Çав ĕçсенче пирĕн батальонăн 3-мĕш ротинчи салтаксем хăйсене уйрăмах палăртрĕç, ыттисем те вĕсенчен каях юлмарĕç».

Финсем лагерьсенче çитĕннĕ çынсене кăна мар, ачасене те, «тыткăна лекнисем» вырăнне хурса, асаплантарнă. Финсен 20-мĕш пехотнăй бригадинчи 13-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Тойво Арбид Лайне çапла кăтартса панă: «1944 çулхи июнĕн пĕрремĕш кунĕсенче эпĕ Петрозаводскра пултăм. Петрозаводск станцийĕнче эпĕ совет ачисем валли тунă лагере куртăм. Çав лагере 5 çултан пуçласа 15 çула çитиччен ачасене вырнаçтарнă. Ачасем çине пăхма та хăрушăччĕ. Вĕсен шăммисем кăна тăрса юлнă, çав шăмăсене çиелтен çĕтĕк-çатăксемпе витнĕ. Ачасем, çавтери асапланса пĕтсе çитнĕ пирки, макăрма та пултараймаççĕ, вĕсем пур япала çине те нимĕнле мар пăхатчĕç».

«Тыткăнри» ачасене финн захватчикĕсем çитĕннĕ çынсемпе танах йывăр ĕçре ĕçлеттернĕ. Финсен çыран хĕрринчи оборонин иккĕмĕш уйрăм батальонĕнчи салтак Ахо Суло Иоганнес хăй куçĕпе çакăн пек ĕç курнă: «1943 çулта çу каçиччен Толбуй районĕнчи Шитики пристанĕ патне, çул тунă çĕре, çывăхри ялсенчен 200 ачана хăваласа пынă пулнă, вĕсене пурне те тĕрмене хупнă çынсем вырăнне хурса, финн салтакĕсем хурал тăрса ĕçлеттернĕ».

1943 çулхи сентябрь уйăхĕнче 2-мĕш номерлĕ лагерьте пурăнакан 10 çулхи ача Леня Зуев пралук карта урлă каçма шутланă. Финн салтакĕ çавна сиснĕ те, нимĕн асăрхаттармасăрах, ачана пăшалпа персе амантнă. Леня çĕре ӳкнĕ, финн салтакĕ вара ун çине тепре персе янă. Аманса пĕтнĕ Зуев лагерь зонине аран-аран шăвăнса çитнĕ. 5-мĕш номерлĕ лагерьте тыткăнра пурăннă Е. В. Лахина свидетельница лагерьти çынсем çав тери хăрушла условисенче пурăнни çинчен каласа панă. Вăл çапла каланă: «15—20 метрлă пӳлĕмсенче 6—7-шер çемье пурăнатчĕ. Мунча е кĕпе çумалли вырăнсем пулман. Ĕçмелли шыва канавран илнĕ. Çав канавра этем виллисем йăваланса выртатчĕç. «Тыткăнрисем» пурте пыйтлланса кайнăччĕ. Лагерьти этемле мар йывăр условисене пула ерекен чир-чĕрсем — цинга, дизентери, шатраллă тиф сарăлнăччĕ».

Выçă пурăннипе тата ерекен чирсем анлăн сарăлнипе мĕнпур лагерьсенче çынсем питĕ йышлăн вилнĕ. Кулленех темиçе вуншар çын вилсе пынă, вĕсен виллисене масар çине эрнере ик-виçĕ хутчен иле-иле кайса тăнă. Акă мĕн каласа [illegible] хăйсен куçĕпе курнă çынсем. Петр[illegible]скри 5-мĕш лагерьте 1941 çулхи [illegible]рĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулх[illegible] уйăхĕччен пурăннă Алексей Порф[illegible] Коломенский çапла каласа парать[illegible]çă пулса ĕçлесе, эпĕ вилнĕ çынс[illegible]герьтен «Пески» ятлă масар çин[illegible] тараттăм, вăл Петрозаводск хул[illegible] километрта вырнаçса тăратчĕ. Вил[illegible]сене кашни эрнере ытларикун, к[illegible]кун тата шăматкун турттараттăм[illegible] çырса пынă тăрăх, 1942 çулхи м[illegible]хĕнче 170 çын вилнĕ, июнь уйăх[illegible] 171 çын, июльте—164 çын, авгу[illegible] 152 çын. 1942 çулхи май уйăхĕнч[illegible]ласа декабрĕн 31-мĕшне çитиччен [illegible] лагерьте пĕтĕмпе 1.014 çын вил[illegible] çулăн пуçламăшĕнче çак лагерьт[illegible] çынна яхăн пурăнатчĕ, анчах пир[illegible] Çар ирĕке кăларнă тĕле унта 4.5[illegible] кăна тăрса юлчĕ».

Комиссие Петрозаводскри кон[illegible]сенче пурăннă çынсем çыру янă, [illegible]сем çапла çыраççĕ: «Эпир пурăна[illegible]гере йĕри-тавра икĕ рет йĕплĕ [illegible] карса çавăрăннăччĕ, пур çĕрте те [illegible]малли вышкăсем лартса тухнăччĕ, [illegible] хĕçпăшаллă конвой хуралласа [illegible] Пире выçăпа асаплантаратчĕç, кăш[illegible] кĕрсенех нагайкăсемпе хĕнетчĕç. [illegible] номерлĕ лагерьте комендант — л[illegible] Салавара, çавăн пекех тата лаг[illegible]менданчĕ Веки Лакоонен уйрăмах [illegible]рĕн хăтланатчĕç... «Правасене пăс[illegible] валли, пуринчен ытла ачасемпе [illegible]сем тата хĕрарăмсем валли, Ку[illegible] Вилгăра, Киндосовăра ятарласа [illegible] лагерь тунăччĕ. Çав лагерьсем [illegible] условийĕсемпе вăтам ĕмĕрти каз[illegible]чен нимĕнпе те уйăрăлса тăмасчĕ[illegible]та совет çыннисене выçă асаплант[illegible] хĕллехи сивĕсенче çара ура çин[illegible] резина калушсем тăхăннă çынсе[illegible]ман ĕçне ĕçлеме хăваласа кăл[illegible] Кунти лагерьсенче пурăнакан çын[illegible] шисем, шапасем, вилнĕ йытăсем [illegible]рăннă. Кунта юнлă варвитти [illegible] тиф чирĕпе, ӳпке шыçнипе иниц[illegible]

III. ФИНН ПАЛАЧĔСЕМ СОВЕТĂН ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ÇАР ÇЫННИСЕНЕ АСАПЛАНТАРСА ТАТА ВЫÇĂХТАРСА ВĔЛЕРЕÇÇĔ

Фашистла командовани 1941 çу[illegible]тябрь уйăхĕнче Карел-Финн С[illegible] Олонец хулинче 17-мĕш номерл[illegible]сыльнăй лагерь организациленĕ[illegible] фронтăн Свирь участокĕнче тытк[illegible]нĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе кĕçĕн [illegible]рĕсене тытса усранă. Лагерь тер[illegible] икĕ рет йĕплĕ пралук карса ç[illegible] йĕплĕ пралук картин çӳллĕшĕ ии[illegible] çити пулнă. Лагерьти мĕнпур [illegible] пĕр-пĕринчен çавăн пекех йĕплĕ[illegible] карса уйăрнă. Тыткăна лекнĕ ç[illegible]нисен çав лагерьти йышĕ тăта[illegible] çынтан пуçласа 1000 çынна çит[illegible] Лагерь коменданчĕ Сойнинен То[illegible]тенант бараксене ӳсĕрле пыра-пы[illegible]те тыткăнри çар çыннисене хăй [illegible] хĕненĕ, çавăн пекех тата вăл хă[illegible]чиненнăйĕсене те çав ĕçе тума [illegible] Комендант заместителĕсем Ингман[illegible]мело, лагерьти следователь Шепа[illegible]тенант тата çар чиновникĕ Шми[illegible]тăн тыткăна лекнĕ çар çыннисен[illegible] сăлтавсăрах патаксемпе тата чăпăрккасемпе тискеррĕн хĕненĕ.

Советăн тыткăна лекнĕ çар çыннийĕсене, фашистла финн палачĕсен шувĕпе начар ĕçлекенскерсене, çӳллĕ тункатасем çине аллисене çӳлелле çĕклеттерсе тăратнă та, çавăн пек пĕр хускалмасăр 30 минутăран пуçласа сехет çурă таран тăма хушнă. Хĕллехи вăхăтсенче çавăн пек асаплантарнине пула тыткăна лекнĕ çар çыннисен алли-урисене тăм илсе янă, вĕсем вара йывăр чирле-чирле ӳкнĕ. Лагерь администрацийĕпе хуралĕ советăн тыткăна лекнĕ çар çыннийĕсене хĕнесе асаплантарнă тата выçăпа хĕн кăтартнă кăна мар, çавăн пекех кăшт «айăпа» кĕрсенех пере-пере те пăрахнă. Тыткăнра пулнă совет çынни Белан Т. çапла кăтартса панă: хуралта тăракан финн салтакĕсенчен пĕри тыткăнри çар çыннине вăл пралук карта патне çывăха пынăшăн кăна пулеметпа [illegible] пытарнă, ăна лагерьтен 100 метр аяккарахра çав ĕç валли ятарласа чавса хатĕрленĕ пулнă.

Суд медицинин эксперт комиссийĕ Олонецри 17-мĕш номерлĕ лагерь çывăхĕнчи масарта тупнă вилесене касса тĕрĕслесе пăхнă. Суд медицини тĕрĕсленĕ чухне çакна палăртнă: çынсен ӳт айĕнчи çу тытакан клетчатки, çавăн пекех тата шалти органсен клетчатки те пĕтсе çитнĕ е пачах та çук, çакă вăл çынсем, выçă пурăннине пула, питĕ начарланса çитнине кăтартса парать. Хăшпĕр вилесен пуçĕсенче тата кăкăр читлĕхĕсенче пуля шăтăкĕсем тупнă.

Вилесене тĕрĕслесе тухнă хыççăн тата свидетельсем кăтартса панă тăрăх, çакна палăртнă: фашистла финн палачĕсем советăн тыткăна лекнĕ çар çыннийĕсене выçăпа асаплантарнă, хĕнесе хĕн кăтартнă, çавăн пекех тата пере-пере вĕлернĕ.

IV. ФАШИСТЛА ФИНН ПАЛАЧĔСЕМ ХĔРЛĔ ÇАРĂН АМАННĂ ОФИЦЕРĔСЕМПЕ БОЕЦĔСЕНЕ ВĔЛЕРЕÇÇĔ

Фашистла финн мерзавецĕсем аманнипе тыткăна лекнĕ совет офицерĕсемпе боецĕсене вĕлереççĕ. Аялараxра Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси аллинчи документсене тата свидетельсем каласа панисене илсе кăтартнă. Çав документсем тăрăх, белофинсем Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсене тĕнче халиччен курман пек тискеррĕн асаплантарни курăнать:

«Акт. Эпир, аялараxра алă пуснисем, 3-мĕш рангри военврач Голынский, 3-мĕш рангри военврач Педарян, кĕçĕн политрук Бестолов, старшина Бочкарев, санитар Жуков, красноармеец Босенко, военфельдшер Рябов, белофинсен варварĕсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ çынсен ӳчĕсене пăхса тухса, çакна палăртатпăр: 1) Куляшев краснофлотецăн ӳчĕ çинче çаксене тупнă: унăн сылтăм хăлхине касса илнĕ, питĕнче прикладпа çапнă йĕрсем тата штыкпа чикнипе пулнă сурансем пур, сылтăм урине чĕркуççи тĕлĕнчен тата пĕçтĕпĕнчен пăрса мăкăлтанă, 2) Зиба краснофлотецăн ӳчĕ çинче çаксене тупнă: унăн питĕнчи ӳтне, уссийĕпе сухалне çунтарса, ĕнтсе янă, сылтăм куçĕ тĕлĕнче юнăхса ларнă пысăк лаптăк пур, сулахай тăнлавĕнче сивĕ хĕçпăшалпа çапса амантнă суран пур, 3) Кривулин красноармеецăн ӳчĕ çинче çаксене тупнă: сылтăм тăнлавĕнче сивĕ хĕçпăшалпа çапса амантнă суран пур, тăнлаври юн тымарне татса пăрахнă, хул шăммине хуçнă, сылтăм хулĕ çинче темиçе суран пур, сулахай куçĕн çӳлти куç хупанкине касса илсе куçне сиенленĕ, 4) Баранов красноармеецăн ӳчĕ çинче çаксене тупнă: унăн кăкăр читлĕхĕнче штыкпа чиксе амантнă 6 суран ытла, икĕ ура тупанĕнче те çĕçĕпе хĕреслĕ касса амантнă сурансем пур».

1944 çулхи июнĕн 28-мĕшĕнче Пуско-Сельга ялĕшĕн пынă çапăçу вăхăтĕнче финсем Хĕрлĕ Çарăн аманнă 70 боецĕпе офицерĕ ытла выртакан вырăна çĕмĕрсе кĕнĕ пулнă. Фашистла ирсĕрсем, аманнă совет çыннисене çав тери тискеррĕн асаплантарса, автоматсемпе персе, штыксемпе, çĕçĕсемпе чиксе тата прикладсемпе çапса, вĕлерсе пĕтернĕ. Çав хăрушă асапран темĕнле ăнсăртран виçĕ çын кăна, вилнĕ пек пулса выртса, сăлăнса юлнă, вĕсем: И. С. Марков сержант тата И. И. Криворучкăпа В. В. Крючков боецсем.

Марков сержант çапла каласа панă: «Пăшал пересси чарăнсан, финн салтакĕсемпе офицерĕсем пирĕн вилнĕ тата аманнă çынсене хыпашлама тытăнчĕç. Манран темиçе метртра уларан аманнă Шучка сержант выртатчĕ. Ун патне 4 финн пычĕç те, унăн гимнастерки çинчи гварди значекне татса илсе, хăйне персе пăрахрĕç. Финсен тепĕр ушкăнĕ аманнă кĕçĕн лейтенанта Баранова штыксемпе чиксе тата çĕçĕсемпе касса вĕлерчĕç. Йĕри-таврах çынсем вилес умĕн йынăшнă сасăсем илтĕнсе тăчĕç. Аманнисенчен хăшпĕрисем, аяккалла шăвăнса кайса хăтăлма хăтланчĕç, анчах финн салтакĕсемпе офицерĕсем вĕсене хăваласа çите-çите, тискеррĕн вĕлере-вĕлере пĕтерчĕç».

1944 çулхи июлĕн 11-мĕшĕпе 12-мĕшĕнче медицина службин майорĕ, патологиллĕ анатомин профессорĕ, медицина наукисен докторĕ М. Е. Браун финсен Котсярви кӳлли районĕнче тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ Хĕрлĕ Çар офицерĕсемпе боецĕсен виллисене касса тĕрĕслесе пăхнă. Кунта çакна палăртнă: аманнă боецсемпе офицерсене финн салтакĕсемпе офицерĕсем çапăçу лăпланнă хыççăн вĕлернĕ пулнă, вĕсенчен: 34 çынна тĕрлĕ пăшалсемпе тата автоматсемпе персе вĕлернĕ, пĕр çыннăнне йывăр япалапа çапса пуç шăммине çĕмĕрнĕ, 6 çынна персе тата мăка япалапа пуçĕсенчен çапса вĕлернĕ.

Финсен çар влаçĕсем Хĕрлĕ Çарăн аманнă боецĕсемпе командирĕсене ăнланса тăрсах юри вĕлерсе пыни финсен тыткăна лекнĕ нумай çар çыннийĕсем кăтартса панисенчен те лайăх курăнать. 3-мĕш пехотнăй бригадăран тыткăна лекнĕ финн салтакĕ Хейсканен Юхо çапла кăтартса панă: «Петрозаводскра пире хирĕç тыткăна лекнĕ красноармеецсем пыратчĕç. Вĕсене пирĕннисем прикладсемпе çапа-çапа хăвалатчĕç. Эпĕ аманнă красноармееца куртăм. Пирĕн салтаксенчен пĕри автомат илчĕ те ăна вырăнтах персе пăрахрĕ». Финсен 21-мĕш уйрăм батальонĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Вяйне Неваранта çапла каласа панă: «Пирĕн батальон Медвежьегорскран çурçĕртерехре наступлени тума тытăнчĕ. Çав çапăçу вăхăтĕнче пирĕн алла 100 красноармееца яхăн тыткăна лекрĕ. Вĕсене тыла илсе кайрĕç. Ниеми лейтенант аманнă красноармеецсене хăй патне хăварчĕ те, вĕсене лавсемпе илсе каяççĕ, терĕ. Тыткăна лекнĕ ытти красноармеецсем çав вырăнтан чылай аяккарах кайсан, Ниеми аманнă красноармеецсене револьверпа пеме тытăнчĕ. Вăл хăй 8 çынна персе вĕлерчĕ, ыттисене вĕлерме вара пирĕн автоматчиксенчен пĕрине хушрĕ. Çав ĕçе пирĕн взводри салтаксем пурте курса тăчĕç».

Финсен 18-мĕш дивизийĕнчи 27-мĕш пехотнăй полкăн тыл начальникĕн связнойĕ Ниеми Леопольд салтак çавăн пек ĕçсем çинчен калаçса панă: «Финн салтакĕсемпе офицерĕсем тыткăна лекнĕ вырăс çар çыннийĕсене пере-пере пăрахнисене эпĕ нумай хутчен курнă. 1942 çулхи март уйăхĕнче эпир Гогланд утравне йышăнса илнĕ чухне выраçсен 30 моряке ытла тыткăна илнĕччĕ. Пирĕн 1-мĕш батальонри салтаксем вĕсенчен 3-ĕшне çул хĕрринчех персе пăрахнине, допрос хыççăн вара ыттисене те пере-пере пăрахнине эпĕ хам куçпа курнă. Офицерсем çапла калатчĕç: вырăс матросĕсем — вĕсем чи çирĕп большевиксем, вĕсене чĕрĕ хăварма юрамасть, тетчĕç. Çав утрава тытса илессишĕн пынă çапăçусене Поери генерал-майор ертсе пычĕ».

Финсен 7-мĕш пехотнăй дивизийĕн штабĕ панă 511-мĕш номерлĕ секретлă инструкцире финн çарĕсем чаçĕсене çапăçу хирĕнче вилнĕ вырăс салтакĕсене çаратма тӳрремĕнех хушнă: «Кирек мĕнле ларутăру пулсан та, май килсе тухсан, противникăн вилнĕ салтакĕсенчен мĕнпур тумтирĕсемпе снаряженийĕсене хывса илмелле. Кирлĕ пулсан, çав ĕçе тума тыткăна лекнĕ çар çыннисене те явăçтармалла. (Çак ĕçе ăна финсен Карелири çарĕн штабĕ телеграфпа панă распоряжени тăрăх çавăн пек тумалла)».

Олонецри 17-мĕш номерлĕ лагерь начальникĕн заместителĕ пулнă Неллонен, Хĕрлĕ Çар аллине тыткăна лекнĕскер, допросра çапла кăтартса панă: «Эпĕ пĕтĕмĕшпех финсем туса пыракан фашистла пропаганда майлă тăнă. Вырăс çыннисене эпĕ хамăн çĕршывăн авалхи тăшманĕсем тесе шутланă. Çав шухăшпа эпĕ вырăссене хирĕç вăрçа тухнă. Советăн тыткăна лекнĕ çар çыннийĕсем валли тунă 17-мĕш номерлĕ лагерĕн администрацийĕ, уйрăмăн илсен, манăн начальник Сойнинен лейтенант çапла калатчĕ: вырăссем тыткăнра чухне те финсемшĕн тăшман пулса тăраççĕ, вĕсем воспитание парăнмаççĕ, хĕнесе лăплантарнă хыççăн кăна вĕсем лагерьти режима тытса пыма пултараççĕ, тетчĕ. Çакна асра тытса, эпĕ советăн тыткăна лекнĕ çар çыннийĕсене нимĕн вырăнне те хуман, эпĕ вĕсенчен çӳлерехре тăратăп тесе шутланă, вĕсем пире хирĕç нимĕн те тума пултарайманнипе усă курса, мĕнле те пулин майлă самант килсе тухсанах, хамăн çилле вĕсем çинче лăплантарнă...»

V. ФИНН ПАЛАЧĔСЕМ ХАЯР ОТВЕТ ТЫТĔÇ!

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси çакна тĕпчесе палăртнă: фашистла финн захватчикĕсем Карел-Финн ССР-ĕн территорийĕ çинче тунă мĕнпур тискер ĕçсемшĕн, Финлянди правительствипе тата финн çарĕн командованийĕпе пĕрлех, çак çынсем айăплă пулса тăраççĕ: Хĕвелтухăç Карели управленийĕн начальникĕ подполковник Котеляйнен, Хĕвелтухăç Карели управленийĕн штаб начальникĕ генерал-майор Арраюры, финн çарĕн 8-мĕш дивизийĕн командирĕ генерал-майор Полоярви, финсен 8-мĕш дивизийĕнчи 4-мĕш пехотнăй полкăн командирĕ полковник Висторa, генерал-майор Пояри, полковник Рольф Шильд, Петрозаводск хулин çар коменданчĕ пулнă капитан Лаукайнен, комендант заместителĕ лейтенант Эломса, Петрозаводск хулинчи концентрациллĕ лагерьсен коменданчĕсем: Вилки Лакоонен, лейтенант Салавара, майор Куурема, лейтенант Каллио, лейтенант Толонен Пенти, лейтенант Нуотто Юсси, Эррикайнен, Кангас, лагерь коменданчĕн заместителĕсем: Ингман, Айрола, Сеппеля, лагерь канцелярийĕн начальникĕ Сарайоки, Олонецри 17-мĕш лагерь коменданчĕсем лейтенант Алапиес, лейтенант Сойнинен Тойво, лагерь коменданчĕн заместителĕсем Салмело, Пелконен, следовательсем: лейтенант Шепалис, çар чиновникĕ Шмидт, тăлмачĕсем: Карпеляйнен тата Пистиляйнен, Киндосово тĕрмин начальникĕ капитан Тойбонен, Киндосовăри лагерĕн коменданчĕ сержант Вихова, 2-мĕш номерлĕ лагерь коменданчĕн заместителĕ Линдхольм Вейко, сержантсем: Аллагонен Пенти, Сивонен Эмиль, Юллилаумма Мати, Вуори Арво, Кассимяки Тюкио, Ламбер Вейко, охранник Хервонен, капрал Инкель Кайвосала, охранник Юлалиманола Эдверд, лейтенант Ниеми.

Вĕсем пурте совет халăхĕн сучĕ умне тăма тата хăйсем тунă тискер ĕçсемшĕн хаяр ответ тытма тивĕçлĕ.

„Польпресс" агентстви пĕлтерни

Люблин хули патĕнчи Майданекри вилĕм лагерĕнче нимĕç оккупанчĕсем советсен тыткăна лекнĕ çар çыннисене тата çав лагере хупнă поляксене, французсене, чехсене, еврейсене, бельгиецсене, венгерсене, сербсене, грексене тата Европăри ытти халăх çыннисене те питĕ йышлăн вĕлернĕ.

Нимĕçсем çак лагерьте советсен тыткăна лекнĕ çар çыннисене питĕ йышлăн пере-пере вĕлернине тата вăрахăн вилмелле тунине асра тытса, Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕ Совет правительствине çакăн пек сĕнӳ панă: нимĕçсем Люблинра тунă усал ĕçсене тĕрĕслеме Польшăпа Совет Союзĕн çыннисенчен тăракан чрезвычайнăй комисси тумалла, çав комиссие вĕсен хăйсен представителĕсене ямалла. Совет правительстви çак сĕнĕве йышăннă та комиссире ĕçлеме хăй енчен çаксене янă: Н. И. Гращенков профессора, В. И. Прозоровский профессора тата Д. И. Кудрявцева.

Польшăпа Совет Союзĕн чрезвычайнăй комиссин председателĕ — Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн председатель заместителĕ Витос господин, комисси членĕсем — ксендз Крушинский доктор, Бялковский профессор, апелляци сучĕн прокурорĕ Бальцежак, суд медицинин профессорĕ Шилинг-Сингалевич, Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн членĕ Зомерштейн доктор (Польша), В. И. Прозоровский профессор, Н. И. Гращенков профессор тата Д. И. Кудрявцев (СССР). Çав комисси халь фашистла нимĕçсем Люблинра тунă усал ĕçсене йĕрлеме, çав усал ĕçсене кам тунине тата вăл ĕçсен организаторĕсене тупса палăртма тытăннă.

Францири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕДИЦИЛЛЕ ВАЙĔСЕН ВЕРХОВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен хĕвелтухăçнелле наступлени туса пыракан çарĕсем Дре, Шартр, Шатоден тата Орлеан хулисене ирĕке кăларнă. Шартр хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Онэ шывĕ урлă каçнă та Дре районĕнче Эр шывĕ çинче плацдарм тытса илнĕ. Сен-Калэ тата Отон хулисене те ирĕке кăларнă.

Нормандире миххе лекнĕ тăшман Ран хулинчен çурçĕртерехре хаяррăн хирĕç тăрать.

Августăн 17-мĕшĕнче ирхине Фалез хулине тăшмантан тасатса пĕтернĕ.

Бретаньре Сен-Мало крепоçне йышăннă. Динар хулине ирĕке кăларнă, нимĕçсен хула комендантне штабĕ-мĕнĕпех тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсене нумай тĕлте хаяррăн пыра-пыра çапнă».

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔС ТАВРАШĔНЧИ ÇАРĔСЕН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи çарĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Францин кăнтăр çыранĕсенче союзниксен флочĕ пĕр чăрмавсăрах ĕçлет. Çĕнĕ вăйсем тата вăрçă материалĕсем турттарса пырсах тăраççĕ.

Союзниксен малти чаçĕсем Тулон хулине çитесси 10 миля та юлман. Варринчи секторта союзниксен çарĕсем хăйсем аннă районсенчен Франци ăшнелле 25 миля таран кĕнĕ. Союзниксен çарĕсен çухатăвĕсем питех те сахал. Туллимар даннăйсем тăрăх, тыткăна илнĕ тăшман салтакĕсен шучĕ 7.000 çынна çитнĕ. Пĕр нимĕç генеральне штабĕ-мĕнĕпех тыткăна илнĕ.

Италире Тибр шывĕн Тури юхăмĕн улăхĕнче союзниксем хăйсен позицийĕсене шывăн икĕ хĕрринче те лайăхлатнă. Италире 5-мĕш армипе 8-мĕш армин фрончĕсенче ытти тĕлте патрульсем çеç кĕрешнĕ. Лару-тăру нумай улшăнман.

Йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем ĕнер, истребительсем хӳтĕленипе, Плоешти районĕнчи нефтьрен ытти таварсем туса кăларакан предприятисене тата тăшманăн Ниш хулинчи аэродромĕсене (Югослави) тапаннă.

Союзниксен тактика авиацийĕ Кăнтăр Францире çĕр çинче кĕрешекен çарсене пулăшса тăнă. Çавăн пекех тата Çурçĕр Италипе Югославири вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапаннă.

ЧЕРЧИЛЛЬ КĂНТĂР ФРАНЦИЕ СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ АННĂ РАЙОНА ПЫНĂ

ЛОНДОН, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр Черчилль Кăнтăр Францие союзниксен çарĕсем аннă района пынă. Вăл унта Англи эсминецĕ çине ларса, Корсика утравĕнчен пынă, вăл союзниксен çарĕсен малти отрячĕсем Кăнтăр Францие ансан темиçе сехетренех çитнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КУНТА ТЫРПУЛА ХАКЛАМАÇÇĔ

ИЕПРЕÇ. «Молния», «Трактор», Ленин тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем ыраш вырса пĕтерсе çуртыррисене вырма тытăнчĕç. «Молния» колхозра тырă вырса пĕтереççĕ. Анчах та Молотов ячĕпе тăракан колхозра тырра виçĕ пайĕнчен пĕр пайне те вырман. Колхозра ĕç дисциплини начар, 20 колхозник Канаш районĕнчи колхозсенче тара кĕрĕшсе выраççĕ. Колхозра ĕçлекенсем те уяр кунсемпе туллин усă курмаççĕ, ĕçĕн пахалăхĕ япăх. Ыраш вырнă вырăнта пĕр тăваткăл метрта 30 пучаха яхăн тăккаланса юлать. Ăна пухассине организацилемен. Çавна пула колхоз уйхирĕнче уйрăм хуçалăхпа пурăнакансем кашни кунах пучах пухаççĕ. Кунта ыраш çапма тытăннă, анчах унта та тăккаланчăк питĕ нумай. Уйран итеме кĕлте турттаракансем кĕлтене урапа çине тиенĕ чухне типтерсĕр тыткалаççĕ, лашасене те çапман ыраш кĕлти параççĕ. Витнĕ итеме 3—4 лав кĕлте кӳрсе килнĕ, ăна та лашасене кĕртсе ярса çитереççĕ, çуррине ытла лашасем ашса тăккаласа хăвараççĕ.

Çаксем пурте колхоз председателĕ Сильвестров юлташ куçĕ умĕнче пулса иртеççĕ, анчах çитменлĕхсене пĕтерес пирки вăл нимĕн те тумасть.

П. КУРАКОВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паян, августăн 20-мĕшĕнче, ЮЛАШКИ КУН саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм «Б У Д Н И» кăтартать.

Ыран, августăн 21-мĕшĕнче, саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм «СВИНАРКА И ПАСТУХ» кăтартма пуçлаççĕ. Виçĕ кун кăна кăтартаççĕ. Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Чăвашсен аш-какай трестне трестра ĕçлеме çакăн пек çынсем кирлĕ: кадрсен отделĕн начальникĕ, секретарь-машинистка, инженер-технологсем, бухгалтерсем, плановиксем, ветеринари врачĕсем, выльăх-чĕрлĕх чĕртавар отделĕн начальникĕ, сбыт тĕлĕшпе ĕçлекен ответисполнитель. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Тельмана, 6. Тел. 5—25.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.